# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

52 (7477) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи июнĕн (çĕртме) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Июнĕн 27-мĕшĕ – Раççей çамрăкĕсен кунĕ

**ХАКЛĂ ÇАМРĂК ЕНТЕШĔМСЕМ!**

Сире Çамрăксен кунĕ – шанчăк, шырав, иксĕлми вăй-хăват тата пĕлӳсем патне ăнтăлнин кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Çамрăксем – хастар вăй-хал, вăл аслă ăрусен чи лайăх йăлисене еткере йышăнса, унта вăхăт ыйтнă пек тӳрлетӳсем кĕртсе çĕнĕ Чăваш Ене – Раççей Федерацийĕн экономика енчен аталаннă тата социаллă яваплăха тĕпе хуракан субъектне çĕклес тĕллевлĕ ырă ĕçе тивĕçлĕ шайра малалла тăсать.

Çамрăксен политики патшалăхăн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсен шутĕнче. Чи малтанах – нацин пысăк пĕлтерĕшлĕ проекчĕсене пурнăçлас енĕпе. Чăваш Республикинче пултаруллă, ăнтăлуллă çамрăксене пулăшас ĕç çĕнĕ шая çĕкленет.

«Çамрăк ĕмĕр иккĕ килмест, ăна лайăх ирттерес пулать»,– теççĕ халăхра. Паянхи çамрăксем халăхăн çак ăслă каларăшне шута илсе пурăнни, обществăпа политика пурнăçне хастар хутшăнни савăнтарать. Паян лайăх ăру çитĕнет, вăл тăван республикăна аталантарассишĕн тата ытларах тăвĕ. Сирĕн ăру малалла çирĕппĕн пăхать, малашлăха хăйĕн ĕçченлĕхĕпе, тĕллеве пурнăçлассишĕн çине тăнипе çывхартать.

Туссем! Чуна кахалланма ан парăр, пуласлăха шанăр, телейлĕ, çаврăнăçуллă пулăр. Асра тытăр: ăнăçу пуласси сирĕнтен хăвăртан килет. Сире палăртнă тĕллевсене пурнăçлас тĕлĕшпе малалла çирĕппĕн талпăнма, сывлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Николай ФЕДОРОВ.**

**ÇАМРĂК ĂРĂВĂН ХАКЛĂ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ!**

Июнĕн 27-мĕшĕнче эпир Раççей çамрăкĕсен кунне паллă тăватпăр. Çамрăксем обществăра яланах активлăхпа, пуçарулăхпа тата çĕннине, прогрессивлине хăвăрт алла илнипе палăрса тăнă. Вĕсем çине пысăк шанăç хураççĕ. Вĕсен аллинче хăйсен пуласлăхĕ кăна мар, кунпа пĕрлех пирĕн çĕршыв тата республика пуласлăхĕ те. Паян пирĕн пурнăçра палăрнă ырă улшăнусене пирĕн çамрăксен малалла тăсмалла, вĕсен руль умĕнче тăмалла, Тăван çĕршыв хăвачĕпе ятне-сумне çĕклемелле. Хальхи вăхăтра хăйсен пултарулăхне аталантарма, хăйсен пĕлĕвĕпе тата ăсталăхĕпе усă курса çынсен пурнăçне лайăхлатма çамрăк ăрăвăн пур условисем те çителĕклĕ.

Çамрăксен политики паян Чăваш Енре тата Раççейре пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлĕн приоритетлă енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Паян çамрăксене ответлă ĕçсем, ертӳçĕ должноçĕсем те шанса параççĕ.

Республикăри мĕн пур çамрăк çынсене ырлăх-сывлăх тата телей, ĕçре тата вĕренӳре ăнăçусем сунатăп. Кашнийĕнех пурнăçра хăйĕн вырăнне тупмалла тата чăн-чăн гражданин пулмалла пултăр.

**Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ,**
**«Единая Россия» фракци членĕ**
**Павел СЕМЕНОВ.**

## Республика кунĕнчен

# Çуралнă кун ячĕпе, республикăмăр!



**РФ Патшалăх Думин председателĕ Б. Грызлов Шупашкара çитсен чи малтанах «Промтрактор усă акционер обществинче пулса курчĕ.**



**РФ ял хуçалăх министрĕ А. Гордеев «Экспо-Контур» заводăн çĕнĕ выставка комплексĕнчи «Регионы – сотрудничество без границ» регионсем хушшинчи выставкăпа паллашать.**

Иртнĕ вырсарни кун, июнĕн 24-мĕшĕнче, эпир тăван Республика кунне чаплăн паллă турăмăр. Уявăн тĕп мероприятийĕсем Куславккапа тата Шупашкарпа çыхăннă пулин те, вăл никама та айккинче тăратса хăвармарĕ. Уяв кунĕ умĕн те, хыççăн та тĕрлĕ мероприятисем кашни районтах пулса иртрĕç. Вĕсем халĕ те вĕçленмен. Республика кунне уявлама вара сумлă хăнасем çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те килчĕç. Вĕсен шутĕнче РФ Патшалăх Думин председателĕ, «Единая Россия» политика партийĕн ертӳçи Б. Грызлов, РФ ял хуçалăх министрĕ А. Гордеев, РФ Президенчĕн Приволжски федераллă округĕнчи полпречĕ А. Коновалов, Чулхула мэрĕ В. Булавин, Мускав правительствин регионсем хушшинчи çыхăну управленийĕн советникĕ С. Пуртов... Пурне ниепле те асăнса пĕтереймĕн.



**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров Куславккара.**

Çак кунсенче тĕрлĕрен пысăк пĕлтерĕшлĕ объектсем хута кайнине палăртма уйрăмах кăмăллă. Акă, çак кунсенче Канашра Ял хуçалăх банкĕн филиалĕн çурчĕ усăлчĕ, Вăрнарта асфальт çул, вокзал хута кайрĕç, Шупашкар районĕнчи Кӳкеçре «Улăп» физкультурăпа сиплев комплексĕ ĕçлеме пуçларĕ т. ыт. те. Куславккара вара автомобиль çулне, автобус маршрутне, 500-мĕш тĕслĕх библиотека уçрĕç.

Уяв кунĕсенче художество пултарулăх коллективĕсем тĕрлĕ çĕрте хăйсен ташши-юррисемпе савăнтарчĕç, интереслĕ спорт ăмăртăвĕсем сахал мар иртрĕç, тĕрлĕрен выставкăсем ĕçлерĕç. Никам та кичем туймарĕ хăйне уявра. Курмалли, пĕлмелли, асра юлмалли пурин валли те çителĕклех пулчĕ. Апла пулсан, çуралнă кун ячĕпе, республикăмăр!

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**(Уява хутшăннă хăнасем Чăваш Ен пирки каласа панисене 2-мĕш стр. пичетленĕ).**

## Официально

**Чувашская Республика**
**Председатель Моргаушского районного**
**Собрания депутатов**
**РАСПОРЯЖЕНИЕ**

22.06.2007 г. № 17 с. Моргауши

**О созыве очередного 19-ого заседания районного Собрания депутатов четвертого созыва**

I. Созвать очередное 19 заседание районного Собрания депутатов четвертого созыва 29 июня 2007 года в 10 часов в зале заседаний администрации района.

II. Предложить на рассмотрение районного Собрания депутатов следующую повестку дня:

1. О районной программе “Развитие малых форм хозяйствования в Моргаушском районе на 2007 – 2011 годы”.
2. О состоянии здоровья населения Моргаушского района в 2006 году.
3. О районной целевой программе “Развитие физической культуры и спорта в Моргаушском районе на 2007-2010 годы”.
4. О Положении “О муниципальном земельном контроле на территории Моргаушского района Чувашской Республики”.
5. О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 01.12.2006 года № С-15/2 “О районном бюджете Моргаушского района на 2007 год”.
6. О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 20 апреля 2007 г. № С-18/6 “О положении об установлении базовых ставок арендной платы за землю на 2007 г на территории Моргаушского района”.
7. О внесении изменений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.06.2005 г. № С-29/6 “О прогнозном плане (программе) приватизации муниципального имущества Моргаушского района”.
8. Об отмене решения Моргаушского районного Собрания депутатов от 27.09.2002 г. №С-12/2 “О порядке предоставления мест для торгово-закупочной деятельности и розничной торговли на территории Моргаушского района вне предприятий торговли и общественного питания”.

III. На заседание районного Собрания депутатов пригласить глав сельских поселений, руководителей предприятий, организаций и учреждений, начальников управлений и отделов администрации района.

IV. Утвердить план подготовки и проведения очередного 19 заседания районного Собрания депутатов (план прилагается).

**Председатель Моргаушского районного Собрания депутатов И.В. НИКОЛАЕВ.**

## Республика кунĕпе Раççей çамрăкĕсен кунне халалласа

# Уяв программи пуян

Нумай пулмасть Республика кунне уявларăмăр. Паян вара – Раççей çамрăкĕсен кунĕ. Çав ятпа паян район центрĕнче «Королевская ночь» уяв ирттерме пăхнă. Вăл тĕп площадьре 20 сехетре пуçланать, çур çĕр иртни 1 сехетчен пырать. Программа пуян. Кунта тĕрлĕрен пултарулăх ушкăнĕсемпе коллективĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартĕç, конкурссенче мала тухнисене, вăтам шкула ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе вĕренсе пĕтернисене чыслĕç, спорт ăмăртăвĕсем иртĕç, фейерверк пулĕ, уяв ячĕпе район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламлĕ.

Пĕр сăмахпа, уявра никама та кичем пулмĕ.

## Хисеп те чыс

# Наградăна тивĕçнĕ

Çĕртме уйăхĕн 20-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн 2006 çулхи лауреачĕсене, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин патшалăх наградисене тивĕçнĕ çынсене чысланă. Республика Президенчĕ тивĕçлисене наградăсем панă май вĕсем пирки ырă, ăшă сăмах нумай каланă. Наградăна тивĕçнисем хушшинче Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕ Л. Майкова та пур. Вăл «Раççей Федерацийĕн суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ. Малашне те ĕçре ăнăçусем сунатпăр хастар ĕçчене.

## Воин-интернационалистсен пурнăçĕнчен

# «Çитсе курăр аннесем патне...»



Пирĕн асаттесем çапăçу хирĕнче пуç хурса та юн тăкса фашизма çăварлăхланă йывăр та тискер вăрçă çулĕсем историе тарăнрах та инçерех юлса пыраççĕ. “Ан пултăрччĕ вăрçă”, – тетчĕç кăшт ĕлĕкрех фронтран сывă таврăннисем тата çак сăмахсем таврах ирттереççĕ калаçусене çав вăрçăн паян та пурăнакан ветеранĕсем. Ан пултăрччĕ вăрçă... Анчах... Çĕр çинче ырăпа усал кĕрешнĕ чух вăрçă вут-çулăмĕ час-часах арçынсем тавра явăнать, ашшĕ-амăшĕсемпе çывăх тăванĕсен куççульне юхтарать, çамрăксен малашлăх ĕмĕчĕсене хуçать.

Çак сăн ӳкерчĕкре эсир Афганистан вут-çулăмĕ витĕр тухнă ветеран-салтаксен пĕр ушкăнне тата çамрăксене çарпа патриотизм воспитанийĕ парассипе пысăк тӳпе хывакансене майăн 8-мĕшĕнче медальсем панă хыççăн куратăр. Вĕсем Афганистанра пуç хунисен ашшĕ-амăшĕсем патне çитсе курни пирки паянхи хаçатăн 3-мĕш страницинче вулăр.

## Çырăнтару – 2007


# Райхаçат çырăнакансене – парнесем









**Хаклă вулакансем! Çырăнтару тапхăрĕ вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. “Çĕнтерӳ ялавне” çырăнса илме васкăр!**

**“Çĕнтерӳ ялавне” 6 уйăха çырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттеретпĕр.**

**Чи телейлисене тĕслĕ телевизор, СВЧ-кăмака, DVD-плеер, утюг, чейник, телефон, миксер, фен тата ытти хаклă та паха парнесем кĕтеççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 147 тенкĕ те 42 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**







